27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944 ИЮЛЬ 5 ЮНКУН 132(6627) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, июлĕн 4-мĕшĕнче, **ПОЛОЦК** хулипе паха чугун çул узелне—нимĕçсен оборонин **ДВИНСК** хули çинелле каймалли вырăнсене хÿтĕлекен хăватлă çирĕплетнĕ районне — штурмласа туртса илнĕ.

ПОЛОЦК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче **МАЛЫШЕВ** генерал-лейтенантăн, **КУЗНЕЦОВ** генерал-полковникăн, **ЧИСТЯКОВ** генерал-полковникăн, **РУЧКИН** генерал-майорăн, **ЕРМАКОВ** генерал-лейтенантăн, **СОЛДАТОВ** генерал-майорăн, **МИХАЙЛОВ** генерал-майорăн, **ЧЕРНИКОВ** генерал-майорăн, **ВЛАСОВ** генерал-майорăн, **ЧЕРНОУС** полковникăн, **ЧИННОВ** генерал-майорăн, **СИВАКОВ** генерал-майорăн, **БАКСОВ** генерал-майорăн, **ЕГОЛИН** полковникăн, **ХВОСТОВ** генерал-майорăн, **БЕЛЯЕВ** генерал-майорăн, **МАКАРЬЕВ** полковникăн, **ПЕШКОВ** подполковникăн, **НИКАНДРОВ** подполковникăн, **БЕЛОВ** подполковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн **ХЛЕБНИКОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **БАЖАНОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **МАКАРОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **АЛЕКСАНДРОВĂН**, артиллери генерал-майорĕн **САМБОРСКИН**, **СТЕПАНЕНКО** полковникăн, **ЧАПАЕВ** подполковникăн, **ЛОБКОВ** подполковникăн, **КУДРЯШЕВ** подполковникăн, **ТЕПЛИНСКИЙ** полковникăн, **НЕТОВ** майорăн, **АБРАМЯН** полковникăн, **КОЧЕТОВ** капитанăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **БУТКОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **ЛИПАТОВĂН**, **ПОДКОВСКИЙ** полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн **ПАПИВИНĂН**, **КУЧМА** полковникăн, **РЫКАЧЕВ** полковникăн, **ФОКИН** подполковникăн, **ПЛАХОВ** полковникăн, **ЗАКЛЕП** подполковникăн, **ЗАВАРУХИН** подполковникăн, **РАЗОРЕНОВ** майорăн, **БОЙКОВ** подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн **КОСАРЕВĂН**, инженери çарĕсен генерал-майорĕн **КУЛИНИЧĂН**, инженери çарĕсен генерал-майорĕн **РАЗВОЗОВĂН** сапёрĕсем тата **БОРОВЯГИН** полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан-лăха палăртса хăварас тесе, **ПОЛОЦК** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсусене «**ПОЛОЦКИ**» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 4-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ** икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, **ПОЛОЦК** хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, **ПОЛОЦК** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **ТАВ ТАВАТАП.**

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ниманама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 4-мĕшĕ.

Шкул ачисен çуллахи ĕçне тĕрĕс организацилер

Шкулсенче вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн шкул ачисем колхоз уйхирне тухрĕç. Вĕреннĕ чухнех вĕсем каникул вăхăтĕнче колхозра ĕçлесе фронтри ашшĕсемпе пиччĕшĕсене пулăшасси çинчен ĕмĕтленнĕ.

Шкул ачисен çуллахи ĕçĕн ăнăçлăхĕ ĕçе тĕрĕс организациленинчен килет. Шкулсенче кăçал та ĕç отрячĕсем тумалла. Малтанхи кунран пуçласах отрядра йĕркелĕх тата дисциплина пулсан кăна шкул ачисем колхоза пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем ĕçе хăнăхса пыраççĕ, хăйсен сывлăхĕсене тĕреклетеççĕ.

ВЛКСМ чылай райкомĕсем шкул ачисен ĕçне лайăх организациленĕ. Сăмахран, ВЛКСМ Октябрьски райкомĕ пĕтĕмпе 29 çĕрте шкул ачисен отрядне тунă. Вĕсенче 315 ача ĕçлет. Уйрăмăнах Тудемерти 7 çул вĕренмелли шкулти отрядăн ĕçне палăртмалла. Кунта икĕ отряд тунă. Вăл отрядсене Т. Терентьевăпа А. Семенов учитель-комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Отрядсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Терентьева юлташ ертсе пыракан отряд «Путь Ленина» колхозра 90 гектар ытла, А. Семенов юлташ отрячĕ «Коммунизм» колхозра 60 гектар çум çумланă.

Тăрăш Тусари 7 çул вĕренмелли шкулта Ю. Иванова, О. Иванова тата Никифорова комсомолка-учительницăсем ертсе пынипе виçĕ отряд ĕçлет. Халиччен вĕсем 123 гектар çум çумланă.

Районри ытти отрядсем те кăтартуллăн ĕçлеççĕ.

ВЛКСМ райкомĕ, шкул ачисен ĕçне тĕрĕс йĕркеленипе пĕрлех, вĕсен канăвне те лайăх организацилеме тăрăшать. Ку тĕллевпе вăл районра 30 ача вырнаçмалăх пионерсен лагерĕ уçать. Кунта валли продуктсем çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Лагерь çак кунсенчех ĕçе тытăнать.

Елчĕк, Кувакино тата Çĕрпÿ районĕсенче те шкул ачисене ялхуçалăх ĕçне анлăн явăçтарнă. Елчĕк районĕнче кăна 192 отряд тунă, вĕсенче 1.244 ача ĕçлет. Вĕсем халĕ çум çумланă, çĕрулми купаланă çĕрте ĕçлеççĕ. Кувакино районĕнчи шкул ачисем колхоз выльăхĕсем валли апат хатĕрлес тĕллевпе тимлĕн ĕçлеççĕ. «Путь Ильича» колхозра комсомолецсемпе шкул ачисем воскресник ирттерсе 70 тонна силос хывнă.

Калас пулать, ачасем каникула кайнăранпа чылай вăхăт иртрĕ пулин те, ВЛКСМ чылай райкомĕсем вĕсене ялхуçалăх ĕçне явăçтарас тĕлĕшпе нимĕнех те туман. Канаш, Сĕнтĕр, Шăхасан, Чкаловски, Çĕмĕрле райкомĕсем ĕç отрячĕсене туса йĕркелемен. Çак вăхăта çитсе те шкул ачисен уйхирти ĕçне мĕнле организацилемелли çинчен ăнлантарса паман.

Халĕ, отрядсен ĕçĕ пуçланнă вăхăтра, ВЛКСМ райкомĕсен çав отрядсене кирлĕ пек ертсе пымалла, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва пуçармалла, лайăх ĕçлекен отрядсен опытне сармалла, юлса пыракансене пулăшмалла.

Шкул ачисен çуллахи канăвĕпе ĕçне тĕрĕс организацилени—çамрăк ăрăва воспитани памалли майсенчен пĕри пулать. Вĕсем çирĕп сывлăхлă, ĕçе юрататан, культурăллă та дисциплинăллă çамрăксем пулса ÿсĕç.

Белоруссин ирĕке кăларнă районĕсене пулăшни

Хĕрлĕ Çар Белоруссии халăхне кунсерен темиçе çĕр хулапа ял нимĕçсенчен туртса илсе ирĕке кăларса парать. Çав районсене бригадăсем тухса кайнă, вĕсем вырăнти халăха кирлĕ пулăшăва параççĕ. Лечебнăй учрежденисем тума унта чи лайăх тухтăрсене янă, оборудовани, медикаментсем турттарса пыраççĕ. Чи малтан, гитлеровецсем юри сарма тăрăшнă эпидеми вырăнĕсене пĕтереççĕ. Ирĕке кăларнă районсене промышленность тата апат-çимĕç таварĕсен пысăк партине янă, 250 библиотека ытла янă, самолетсемпе центрти тата республикăри хаçатсене илсе пырса салатаççĕ. (ТАСС).

Ирĕке кăларнă Витебск хулинче

Вăрмансенчен хăйсен тăван хулине таврăнакан çынсен ушкăнĕсем пыраççĕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсем Витебск хулине йăлтах çаратса ишсе пĕтернĕ. Витебск хулинчи чи пысăк предприятисен стенисем кăна е ишĕлчĕк купăсем çеç тăрса юлнă.

Ирĕке кăларнă хыççăн малтанхи кун Витебск хулинче мĕн пурĕ те хулара 100 çынтан ытла пулман. Халĕ ĕнтĕ темиçе пине çитрĕç. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе пĕрле хулана парти тата совет органĕсем пырса кĕчĕç. Хулара халĕ 200 койкăлăх больница уçнă, çăкăр завечĕ организацилеççĕ, столовăй, радиоузел ĕçлеме пуçларĕç, «Витебский рабочий» ятлă область хаçачĕ тухать. Хулари халăх Хĕрлĕ Çар боецĕсене нимĕçсем пÿртсен ăшне лартса хăварнă минăсене тасатма пулăшать, суртйĕрсене юсаса йĕркелет. (ТАСС).

Чăвашсен ташăпа юрă ансамблĕн гастролĕсем

Чăвашсен ташăпа юрă ансамблĕ июнь уйăхĕнче Куйбышевра тата Куйбышев облаçĕнчи Чапаевск, Сызрань, Борское хулисенче гастрольре пулнă. Ансамбль Ф. Лукин юлташ ертсе пынипе пурĕ 15 концерт панă. Концертсен программинче: чăваш юррисемпе ташшисем, совет композиторĕсен юррисем, Совет Союзĕнчи халăхсен юррисемпе ташшисем тата классиксен произведенийĕсем.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 3-мĕшĕнче **КАРЕЛИ** фрончĕн çарĕсем, **ПЕТРОЗАВОДСК** хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — **СЕМЧЕГОРА, УССУНА, КРАСНАЯ РЕЧКА, КЕНЯКИ, СЯМОЗЕРО, САЛМЕНИЦА, КУКОЙЛА, ПУЛЬЧЕЙЛО, САРСЕЛЬГА, ВАРЕНСЕЛЬКЯ, ВАРПАСЕЛЬКЯ** ятлă ялсем тата **ЧАЛКА, ПАДОЗЕРО, ВИЛЛЯГОРА, КУТИЖМА, СЯНЬГА** ятлă чугун çул станцийĕсем (**ПЕТРОЗАВОДСКПА СОРТАВАЛА** хушшинчи чугун çул çинче).

ПОЛОЦК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем наступление малалла вăйлатса пынă, Вилейка облаçĕнчи район центрĕсене—**ГЛУБОКОЕ** хулине, **ДОКШИЦЫ** хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—**ПОГОСТ НОВЫЙ, ИОДЫ, МОСАРЖ, ХОРОШКИ, КРУЛЕВЩИЗНА, ПОРПЛИЩЕ, ПАРАФЬЯНОВ** ятлă пысăк ялсем тата **КРУЛЕВЩИЗНА, ПОРПЛИЩЕ, ПАРАФЬЯНОВ** чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем **ПОЛОЦК** хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа урамсенче çапăçма тытăннă.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, **БЕЛОРУССИРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, тăшмана флангсенчен иртсе кайса инçетрен çавăрса илмелли операцие çав тери хăвăрт туса, июлĕн 3-мĕшĕнче Совет Белоруссийĕн столицине **МИНСК** хулине штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — Минск облаçĕнчи район центрĕ **ЛОГОЙСК** хули, Вилейка облаçĕнчи район центрĕ **КУРЕНЕЦ** хули, **БУДСЛАВ, ДОЛГИНОВО, БАКУНЬКИ, КРАЙСК, ДУНАЙ, КРЕМЕНЕЦ, СОСЕНКА, СТАРИНКИ, ИЛИЯ, БЕЛОРУЧ, ОСТРОШИЦКИЙ ГОРОДОК** ятлă пысăк ялсем тата **БУДСЛАВ, КРИВИЧИ, КУРЕНЕЦ** чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем **МОЛОДЕЧНО** хулипе чугун çул узелĕ патне таччăнах пырса тухнă та тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма тытăннă.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çак çулхи июнĕн 28-мĕшĕпе июлĕн 1-мĕшĕ хушшинче 13.256 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче 95-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Михаэлис генерал-майор пур. Çапла ĕнтĕ Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен шучĕ июлĕн 1-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле 33.256 çынна çити ÿснĕ.

БАРАНОВИЧИ хули енче **БЕЛОРУССИРИ** 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Минск облаçĕнчи район центрне **МАРЬИНА ГОРКĂ** хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — **СМИЛОВИЧИ, ПУДЕЦКАЯ, СЛОБОДА, СКОБРОВКА, ПУХОВИЧИ, ОМЕЛЬНО, ШАЦК, ВАЛЕРЬЯНЫ, СЕМЕНОВИЧИ, КУДИНОВИЧИ, БОЛЬШАЯ РАЕВКА, ТИМКОВИЧИ, ЛЕШНЯ, СЕМЕЖЕВО, СТАРИНА, МАЛОЕ РОЖИНО** ятлă пысăк ялсем тата **БЛУЖА, ПУХОВИЧИ, МОРОЧЬ, ТИМКОВИЧИ** чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, туллимар даннăйсем тăрăх, июлĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче 3.658 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисен шутĕнче 36-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Конради генерал-майор пур. Çапла ĕнтĕ Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен шучĕ июлĕн 2-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле 39.338 çынна çити ÿснĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июлĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 85 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Петрозаводск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, малалла ăнăçлăн куçса пырса, тăшманăн хушăри темиçе позицине çĕнтернĕ те финсен 4 батальонне аркатса тăкнă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем Семчегора ятлă çирĕплетнĕ пункта туртса илнĕ чухне 400 финн салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Спасс-Наволок ялĕнче пирĕн боецсем финсен концентрациллĕ лагерĕнче асапланса пурăнакан 1000 совет граждание ытла ирĕке кăларнă.

* * *

Полоцк хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, шоссе çулĕсен паха узелĕ пулса тăракан Глубокое хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, 200 çынна тыткăна илнĕ. Полоцк районĕнче совет чаçĕсем утăм хыççăн утăм малалла куçса пынă. Нимĕçсем ку хула йĕри-тавра питĕ йышлă оборона сооруженийĕсем туса тултарнă. Тăшман питĕ хытă хирĕç тăрать, Полоцка темле пулсан та хăй аллинчех тытса хăварма хăтланса, вăл çапăçăва çĕнĕ вăйсем кĕрте-кĕрте ярать. Совет танкĕсемпе пехоти, артиллерипе авиаци пулăшса тăнипе, нимĕçсем хытăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Полоцк хулин кăнтăр енчи хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн ытти чаçсем Полота шывĕ урлă каçнă та Полоцк хулин çурçĕр-хĕвелтухăç енчи хĕррине татса кĕрсе кайнă. Урамсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ, алă вĕççĕн тытăçса илеççĕ. Тăшман питĕ пысăк сухатусем тÿсет. Совет боецĕсем пĕр участокра кăна 1.200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 18 тупă, 14 миномет, 56 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Минск шоссе çулĕ тăрăх çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен чаçсем çĕрле Минск хулине кĕмелли сывăхри вырăнсем патне пырса тухнă. Совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем нимĕçсен оборонин тулашри позицине çĕмĕрсе тăкнă та хулана пĕр вăхăтрах çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчен, хĕвелтухăçĕнчен тата кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Ирхине 7 сехет çитнĕ тĕле нимĕçсене Минск хулин хĕвелтухăç пайĕнчен хĕссе кăларнă та, çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Свислочь шывĕ урлă каçнă, кăнтăрла çитиччен вара тăшманăн гарнизонне йăлтах аркатса тăкнă. Совет воинĕсем Совет Белоруссийĕн столицине, чугун çулсемпе шоссе çулĕсен питех те паха узелне — Минск хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Минскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем Логойск хулине тытса илнĕ. Совет çарĕсен наступленине чарса лартма хăтланса, тăшман кунти çапăçăва фронтăн урăх участокĕнчен илсе килнĕ танковăй дивизие кĕртсе янă. Совет артиллерисчĕсемпе танкисчĕсем нимĕçсен 30 танкне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен ирĕксĕр васкасах каялла чакма лекнĕ. Гвардеец-танкистсем Чернявка ялĕ районĕнче нимĕçсен 25-мĕш моторизованнăй дивизийĕн штабне аркатса тăкнă. Тепĕр участокра пĕр чаçри подразделенисем нимĕç пехотин вăйлатнă батальонне аркатса тăкнă. Вунă кĕпçеллĕ 6 миномет, улттă кĕпçеллĕ 6 миномет, 8 танк тата 20 автомашина тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Барановичи хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман танкĕсемпе пехоти совет чаçĕсене хирĕç контратака тунă. Пирĕн танкистсемпе пехотинецсем тăшман контратакине сирсе янă та, çав тери хăвăрт малалла куçса, Пуховичи чугун çул станцийĕпе Марьина Горка хулине туртса илнĕ. Çак çапăçура нимĕçсен 25 танкне тата темиçе çĕр гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, тыткăна нумай илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени боецĕсем, малалла ăнăçлăн куçса пырса, нимĕç пехотин пĕр полкне, 12 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупăпа пĕтерсе тăкнă. 570 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕ Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 4.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен Суворов ячĕпе тăракан отрячĕ икĕ кун хушшинче тăшманăн 2 бронепоездне тата пĕр пулăшса çÿрекен поездне ÿпĕнтерсе янă. 2 паровоз, броньăланă 4 платформа, броньăланă 5 вагон, 9 тупă тата пысăк калибрлă 6 пулемет çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Нимĕçсен 35 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ е аманнă. Партизансем нимĕçсен шултăра калибрлă 4 пулеметне тытса илнĕ.

* * *

Рогачевпа Бобруйск районĕсенчи çынсем фашистла нимĕç ирсĕрĕсен çав тери тискер ĕçĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Çак çулхи мартпа апрель уйăхĕсенче гитлеровецсем Зеленый Дуб, Широкий Рог, Ухватовка, Козловичи, Лиски ялĕсенче (Рогачев районĕ) тата Вила ялĕнче (Бобруйск районĕ) тата ытти чылай ялсенче ашшĕ-амăшĕсенчен 8 çулхи тата унтан аслăрах ачасене турта-турта илнĕ. Эсэсовецсен командисем, ялсене хупăрла-хупăрла илсе, пÿртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе, çав пĕчĕк ачасене тытнă та эшелонĕ-эшелонĕпе Бобруйск хулине ăсатнă, унтан вĕсене «донорсен» лагерĕсене янă. Лагерьсенче пĕчĕк ачасене вĕлерекен фашистсем çав ачасен юнне нимĕçсен аманнă офицерĕсемпе салтакĕсене яма сăрăхтарса илнĕ. Юн пĕтнипе совет ачисем темиçе çĕр е темиçе пин ача вилнĕ. Поезд çинче чухнех çав телейсĕр ачасене «донорсен» лагерьне илсе каякан нимĕç хуралçисем çапла каланă: «Эпир сире вĕлерме илсе каятпăр, унта сирĕн пĕтĕм юна сăрăхтарса илеççĕ те эсир вара вилетĕр», тенĕ. Аслăрах ачасем нумайăшĕсем тарма хăтланнă. Поезд хуллентерех кайнă вăхăтра вĕсем вагонсенчен тулалла сике-сике ÿкнĕ. Нимĕçсем çав ачасене автоматсемпе пере-пере вĕлернĕ.

Фашист чунилисем тунă усал ĕçсен виçи çук. Анчах та тавăру сехечĕ сывхарса çитет. Урса кайнă гитлерла бандитсен хăйсем вĕлернĕ пĕчĕк ачасен мĕнпур асапĕсемшĕн, вĕсен куççулĕпе юнĕшĕн пĕтĕмпех ответ тытмалла пулĕ.

Планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци

КУСЛАВККА, июлĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри рабочисемпе инженерпа-техникла работникĕсем тата служащисем Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнче кăларнă приказне ответлесе çурçулти плана срокчен тултарма сăмах пачĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне ăнăçлăн пурнăça кĕртрĕç. Комбинат çурçулти плана 10 кун малтан пурнăça кĕртсе, çĕршывпа фронта планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци пачĕ. Ăмăртура Фитин, Нефедов юлташсем ертсе пыракан цех коллективĕсем малта пыраççĕ.

Халĕ комбинат коллективĕ мухтавлă Хĕрлĕ Çар паттăррăн наступлени туса пынине ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе саламлать. Комбинатра социализмлă ăмăрту ытларах та ытларах сарăлать. Нормăна тултарман рабочисен шисепĕ чакса пырать.

В. ВОЛОДИН.

Костя Кравчук—Суворовла училищĕн воспитанникĕ

Харьковри Суворовла çар училищине (Чугуев хули, Харьков облаçĕ) вĕренме Киеври пионер Костя Кравчук çитнĕ. Костя Кравчука икĕ полкăн çапăçусенчи пулнă ялавĕсене çăлса хăварнăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Училище воспитанникĕсем хăйсен çĕнĕ юлташне ăшшăн кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Берлин хапхи

Паян, Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче ĕмĕрлĕхе манми сăмахсем калани шăп та шай виçĕ çул тултарнă кун, эпир Сталин юлташăн çĕнĕ приказне илтрĕмĕр. Приказ совет хĕçпăшалĕн çĕнĕ триумфĕ çинчен — Минск хулине штурмласа нимĕçсенчен туртса илни çинчен пĕлтерчĕ. Сталин юлташ хăйĕн çав асăннă малтанхи сăмахĕнчех пирĕн килес çĕнтерÿсем, сывăх мар, анчах çапах та чăннипе пулмалли çĕнтерÿсем çинчен питĕ шанмалла каларĕ. Вăл ялан пекех ним хитрелетмесĕр, ĕçсем чăннипе мĕнле тăни çинчен пĕр пăркаланмасăр яр-уççăн та лăпкă каларĕ, унăн лăпкă сăмахĕсене çĕр чăмăрĕ çинчи темиçе миллион çын илтрĕ, вăл çав çынсен чунĕсене çĕнтерÿ пурпĕрех пирĕн аллăра пулассине тарăн шухăшпа ĕненме чĕрĕ сывлăш вĕрсе кĕртрĕ.

Халĕ эпир Сталин юлташ çавăн чухне каланă çĕнтерÿсем вăйланса пынине кунран-кун хăватлăланса пыракан хавасăхпа туйса пурăнатпăр. Чăнлăх Гитлерăн ирсĕр палачĕсен усал кĕтĕвĕсене ярса тытса, тавăру хĕçĕпе кунсеренех пĕтерсе пынине куçкĕретĕн куратпăр.

Гитлеровецсем Минск çинчен каланă икĕ «афоризма» аса илес килет паян. Çав «афоризмсене» нимĕçсем Минск хулине хăйсем йышăннă хыççăнах, «ĕçсенчен пушанни вăхăтра», хĕçпăшалсăр çынсене пĕрре ирхине çакса вĕлерме чăрăнсан, апат çисе тăраннă хыççăн, тепре çакма тытăниччен вăхăтра каланă. «Минск—пирĕн, ĕмĕрлĕхех пирĕн пулĕ, мĕншĕн тесен вăл Берлина кĕмелли хапха»,—тесе çырчĕ çавăн чухне «Ост фронт» хаçат. «Минскпа Витебск пирĕн укрепленисем пулĕç, анчах вĕсем ытти хуласем пек хуласем пулмĕç, мĕншĕн тесен белорутенсем ялта пурăнма кăна тивĕçлĕ, вĕсем çĕр ĕçĕпе кăна пурăнмалла, вĕсене хулара пурăнни килĕшмест»,—тесе çырчĕ ун чухне «Политише корреспонденц» хаçат. «Белорутен» партизанĕсем нимĕç Минскра пурăннă вăхăтра нумай хутчен хăйсем хула сывлăшĕпе сывлама пăрăнса тăманнине кăтартрĕç. Вĕсем Минск хулине час-часах кăмăлласах кĕре-кĕре кайрĕç, вара кашни хутĕнчех унти нимĕç офицерĕсен хваттерĕсене питĕ майлă сирпĕнтере-сирпĕнтере ячĕç.

Анчах та гитлеровецсен Минск çинчен хыснă тепĕр «афоризмне» хирĕç, «Минск Берлина кĕмелли хапха» тенине хирĕç чăнахах та тавлашса тăмалли çук. Ун пирки çакна та аса илме юрать. Хăй вăхăтĕнче нимĕçсен радиогенералĕ Дитмар хăйĕн пĕр обозренине сассине хăпартса ярса çакăн пек сăмахсемпе пĕтерчĕ: «Ĕçе татса параканни Киев мар, Минск пулать, унта вара вырăссем нихăçан та пырса кĕреймĕç!» — терĕ. Çак сăмахсене вăл Хĕрлĕ Çар Киева туртса илнĕ хыççăн каларĕ. Халĕ эпир çав Дитмар мĕн тухса калĕ-ши, тесе интересленсех кĕтсе тăратпăр...

Академик Е. ТАРЛЕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Ÿкерчĕк çинче: Пирĕн паттăр земляк — И. Т. Тимофеев юлташ. Вăл — Çĕрпÿ районĕнчи Первомайск ялĕнчи чăваш. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн И. Т. Тимофеева «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă.

Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов юлташ Шупашкарта

Самолет çине «А. М. Сарсков колхозникрен Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлова» тесе çырнă. Ку самолета хамăрăн паллă земляк валли Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз председателĕ Андрей Михайлович Сарсков юлташ хăй перекетленĕ укçапа туяннă.

Çак самолетпа ĕнер Шупашкара Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов вĕçсе çитрĕ.

Орлов юлташ Тăван çĕршывăн сумлă патриочĕ А. М. Сарсков патне хăнана каять. Унтан вăл Сарсков юлташа хăйĕн чаçне, самолета паллă пилота панă ятпа пулса иртекен уява, илсе каять.

Коммунистсен районри пухăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) райком секретарĕн Григорьев юлташăн отчетлă докладне сÿтсе-яврĕ.

Докладчик отчетлă тапхăрта районри парторганизаци чылай ÿснине палăртрĕ. Парти ретне предприятисемпе учрежденисенчи, колхозсенчи малта пыракан çынсем кĕреççĕ. Анчах парти ретне илес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Пуху колхозниксемпе колхозницăсене тата комсомолецсене партие сахал илнине палăртрĕ.

Пуху райкомăн агитаципе пропаганда отделĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатнине палăртрĕ. Суракри вăхăтĕнче колхозсенче докладсемпе калаçусем тата ытти мероприятисене нумай туса ирттернĕ.

Пухура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ М. Андреев юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл районри парторганизаци ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ.

Пуху райком составне 16 çынран суйласа хăварчĕ. Райком пленумĕ ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Григорьев, иккĕмĕш секретарĕ пулма Гладков, кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма Герасимов юлташсене суйларĕ.

Шкул ачисен хастарлăхĕ

ВĂРНАР. Вăрманкас çамрăкĕсем шкулта вĕренÿ çулĕ вĕçленсенех колхоз ĕçне хутшăнчĕç. Вĕсем правлени е бригадирсем мĕн хушнине пĕр пăркаланмасăр пурнăçлаççĕ. Халĕ вĕсем хĕрсех уя тислĕк тăкаççĕ. Çак ĕçре 7-мĕш класра вĕренсе тухнă Сильвестр Грачев, 13 çулхи Павел Оськин (5-мĕш класс), 15 çулхи Ваня Михайлов кашни кун хăйсен нормисене 170 процент таран тултарса пыраççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта та 70—110-шар ĕçкунĕ тунă.

Кăçал 8-мĕш класран вĕренсе тухнă Маруся Чугуновăн хастарлă ĕçне 5-мĕш бригада членĕсем çеç мар, пĕтĕм колхоз пĕлеççĕ. Вăл иртнĕ çулта 3 уйăх хушшинче 152 ĕçкунĕ тунă. Тырă вырнă чух кунсерен 2—3-шер норма тултарнă. Çакă вăл тăрăшса, вăя хурса ĕçленинчен килнĕ.

Чугунова юлташ кăçал та колхозра пысăк хастарлăхпа ĕçлет. Çум çумланă çĕрте малтанхи кунсенчех нормăна 150—170 процент тултарса пычĕ. Ĕçчен хĕрача кăнтăрла çум çумлать е тислĕк тăкать, каçхине пахча-çимĕçсем шăварать.

Вăрманкас çамрăкĕсен пĕр ĕмĕт: ытларах вăя хурса ĕçлер те колхоза гектартан 100 пăт тырă илме пулăшар, теççĕ вĕсем. Çамрăк патриотсен хастар ĕçĕ колхоза вăйлă тырпул туса илме пулăшать.

(Хамăр корр.).

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Республикăри колхозсем июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕртме тумалли, пахча-çимĕçсене çумламалли, утă çулса пухмалли тата силос хывмалли плансене мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Çĕртме тунă	Пахча-çимĕçсене çумланă	Улăхри утта çулнă	Силос хывнă
Улатăр	18,2	54,6	37,4	12,7
Элĕк	74,1	100,0	44,3	8,2
Вăрнар	72,0	49,0	19,8	13,7
Йĕпреç	35,6	—	78,3	22,0
Ишлей	77,2	—	12,1	45,4
Калинино	78,6	77,4	14,3	34,0
Канаш	86,4	67,2	59,1	18,2
Куславкка	61,1	20,8	4,7	19,4
Комсомольски	52,9	61,4	35,9	39,7
Красноармейски	95,0	—	13,4	4,3
Хĕрлĕ Чутай	62,5	73,2	34,5	—
Кувакино	1,8	6,5	1,4	—
Сĕнтĕрвăрри	77,8	45,1	2,5	56,5
Муркаш	80,2	100,0	61,8	33,4
Октябрьски	68,6	—	21,1	45,9
Первомайски	46,4	58,5	68,5	6,6
Пăрачкав	25,5	71,4	51,4	20,5
Советски	85,8	—	26,0	13,2
Сĕнтĕр	82,1	52,9	13,0	60,0
Вăрмар	70,9	100,0	116,8	15,3
Çĕрпӳ	91,4	—	28,5	21,7
Шупашкар	90,4	100,0	11,3	5,0
Чкаловски	26,9	—	120,0	—
Чурачăк	85,5	—	11,0	73,1
Шăмăршă	17,4	—	—	—
Шăхасан	66,3	100,0	25,2	14,1
Çĕмĕрле	46,8	—	46,3	58,7
Етĕрне	61,2	33,0	32,8	5,8
Елчĕк	81,7	100,0	88,0	15,9
Тăвай	40,5	98,6	20,0	5,0
Шупашкар хули	75,9	65,7	—	—

1944 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри МТС-сенчи тракторсем мĕнле ĕçленине кăтартакан

СВОДКА
(процентпа)

МТС-сем	Тракторсемпе ĕçленĕ, сухалани çине куçарса	Çĕртме тунă
Вăрнар	70,0	64,0
Йĕпреç	62,7	49,8
Куславкка	56,6	58,5
Çĕрпӳ	56,5	39,7
Красноармейски	53,4	28,8
Калинино	50,7	62,1
Елчĕк	50,5	30,5
Тăвай	49,3	18,0
Чкаловски	48,4	23,6
Шăхасан	47,2	9,1
Первомайски	46,7	28,5
Комсомольски	46,3	35,0
Çĕмĕрле	44,3	25,5
Ишлей	43,1	24,4
Сĕнтĕрвăрри	41,9	28,4
Сĕнтĕр	41,5	14,9
Шупашкар	39,4	28,8
Сурмайдан	38,8	10,5
Етĕрне	38,3	23,8
Вăрмар	38,0	1,1
Улатăр	36,2	18,3
Элĕк	35,2	14,3
Хĕрлĕ Чутай	34,3	9,7
Кувакино	32,5	—
Кожевенски	32,5	—
Канаш	30,3	31,4
Шăмăршă	28,1	7,1
Октябрьски	26,5	24,6
Пăрачкав	26,5	25,1
Пĕтĕмпе	42,8	25,2
Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	37,7	11,4

Кăçал утă çителĕклĕ хатĕрлетпĕр

Октябрьски районĕнчи «Новый быт» колхоз утă çулма тытăнчĕ. Çак ĕçе колхозра ĕçлеме пултаракан мĕнпур çынсене явăçтартăмăр. Утă çулас ĕç халĕ хĕрӳллĕ [illegible]

Юлашки ик-виçĕ кун хушшинче 50 гектар ытла çултăмăр.

Уйрăмăнах В. Аршуков тата А. Петров ертсе пыракан бригадăсем лайăх тĕслĕх [illegible]

С. ТОПТЫГИН.
«Новый быт» колхоз председателĕ.

2434 тонна силос хывнă

МУРКАШ, июлĕн 4-мĕшĕ (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи кун тĕлне 2.434 тонна силос хывса плана 52 процент тултарнă. [illegible]

Т. ИВАНОВ.

Çум çумлама шутламаççĕ

ТĂВАЙ. [illegible] тăракан колхозра çураки вăрăха тăсăлчĕ. Хăшпĕр участоксенче çак вăхăта çитсе те тырăсем шăтман. Тырă шăтман вырăнсенче çумкурăкĕ кашласа ӳсет. 3-мĕш бригада членĕсем çум çумлама тухрĕç, анчах та ячĕшĕн кăна çумланă — пирки çумкурăкĕсем çаплипех ӳсеççĕ, тырă шăтман вырăнсене пачах çумламан. Колхоз [illegible] те çум çумлама тытăнман. Колхоз правленийĕ, çавăн пекех агрономсем те çум çумлас ĕçе организацилес пирки нимĕн те тумаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вăйлă тырпулшăн сăмахпа çеç кĕрешеççĕ.

В. ФИЛИППОВ.

Кĕтетпĕр

[illegible]

Эпир хăмăрăн туссене çĕнтерӳпе тавăрнасса кĕтетпĕр. Вĕсем çуркунне, çулла, е кĕркунне — пурпĕрех таврăнаççĕ.

Янов СИГАЙ.
Анат Сăнар ялĕ, Советски районĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

НОРМАНДИРЕ ТЫТКАНА ЛЕКНĔ НИМĔÇСЕН ХИСЕПĔ

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

НИМĔÇСЕН ИТАЛИРИ 14-МĔШ АРМИЙĔН КОМАНДУЮЩИЙĔ МАКЕНЗЕН ГЕНЕРАЛА ВЫРĂНТАН КĂЛАРНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ВЕНГРИРИ, РУМЫНИРИ ТАТА ЮГОСЛАВИРИ НЕФТЬ ПРОМЫСЛИСЕНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

РУМЫНИН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ЦЕНТРĔСЕНЧИ ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ УРĂХ ВЫРĂНСЕНЕ КУÇАРНИ

СТАМБУЛ, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

АКАЛЧАНСЕМПЕ ФРАНЦУЗСЕМ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ АНĂÇЛА ВĔÇЛЕННĔ

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

ЧЕРЧИЛЛЬ КĂНТĂР АНГЛИЕ КАЙНИ

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

СОВЕТ СОЮЗĔНЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ НИМĔÇСЕН ВИÇĔ ГЕНЕРАЛĔ ПĔТНĔ

ЖЕНЕВА. Июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible] артиллери генералне Мартинека, артиллери генералне Пфейфера тата генерал-лейтенанта Шюнемана вĕлернĕ.

ТУРЦИПЕ АНГЛИ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ

АНКАРА, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра Анкарара Турципе Англи хушшинче калаçусем пыраççĕ. Çав калаçусем Англи Турцирен хром илсе тăрас ĕçĕн техникăллă ыйтăвĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Германи валли хатĕрлесе хунă хрома халĕ Англи илет.

1943—44 çулсенче Турцирен Германие 180 пин тонна хром илсе каймалла пулнă. Çав шутран Германие пĕтĕмпе те 30 процента яхăн кăна янă.

ВЕНГРИ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЧЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ХĂЙЕН ШПИОНĔСЕНЕ ЛАРТНĂ

СТАМБУЛ, июлĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри предприятийĕсенче саботажла ĕçсем анлăн сарăлса кайнă. Промышленность ĕçне мĕнле те пулин йĕркелесе тăма май пултăр тесе, Венгрири пуканелле правительствăн чрезвычайнăй мерăсем йышăнма лекнĕ. Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, предприятисенче «рабочисен комитечĕсем» текен организацисем тăвасси çинчен распоряжени кăларнă. Çак «рабочи комитетсем» полици шпионĕсенчен тăракан организацисем пулса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен çав «комитетсен» членĕсене пурне те полици лартать. Вĕсем пурте рабочисем мĕн тунине, мĕн шухăшланине асăрхаса пĕлсе тăмалла, вара «шанчăксăр» рабочисем çинчен полицие пĕлтерсе тăмалла.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН ИЛСЕ ПЫНĂ РАБОЧИСЕНЕ ВĔЛЕРЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Мадридран пĕлтернĕ тăрăх, унта Германирен çитнĕ çынсем çапла каласа кăтартнă: гитлеровецсем Германие ют çĕршывсенчен ирĕксĕр хăваласа пынă рабочисене союзниксем атакăлакан предприятисенче ĕçлеме килĕшменшĕн пере-пере пăрахаççĕ. Пĕр çын, нимĕçсен официальнăй даннăйĕсемпе паллашса тăнăскер, çапла каласа панă: июнĕн 8-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче пĕр Мюнхен хули районĕнче кăна ют çĕршывсенчен хăваласа пынă 741 рабочие асаплантарса вĕлернĕ. Эссен районĕнче 500 рабочие, Кельн районĕнче 500 рабочие вĕлернĕ.

КĔСКЕН

● Июнь уйăхĕнче Вăтаçĕр тинĕс районĕнче нимĕçсен 480 самолет пĕтнĕ.

● Лăпкă Океан çинче американецсен авиацийĕ вăрçă пуçланнăранпа сывлăшри çапăçусенче тата çĕр çинче японецсен сахалтан та 12.086 самолетне пĕтернĕ. Çав вăхăт хушшинчех американецсен 2.726 самолет кăна пĕтнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тĕнчери ĕçсене пăхса тухни

Хĕрлĕ Çар çав тери хăвăрт наступлени туса пыни çинчен тата питех те анлă фронтра пĕр вăхăтрах пулса пыракан операцисенчи мастерлăх çинчен ют çĕршыв хаçачĕсенче анлăн çыраççĕ. Совет командованийĕ пуçласа янă наступленин халиччен пулман анлăшĕпе хăватне вăрçă ĕçĕсене пăхса тăракан обозревательсем пысăка хурса хаклаççĕ. «Иртнĕ пилĕк кун хушшинче пĕтĕм тĕнче вăрçăсен историйĕнчи чи пысăк наступленисенчен пĕрине курчĕ. Çав наступленире нимĕçсен анлă фронтра тунă хăватлă та тарăн оборонин рубежĕсене вырăс артиллерийĕ çапса аркатрĕ, вырăс танкĕсем таптаса лӳчĕркерĕç, вырăссен çав тери чаплă пехоти çĕнтерсе илчĕ», — тесе çырать Америкăри «Нью-Йорк таймс» хаçат.

Хĕрлĕ Çар хăй пырса çапма Витебск районне суйласа илнине вăрçă ĕçĕсене пăхса тăракан обозревательсем пысăка хурса хаклаççĕ. Çакă вăл совет командованийĕ хăйĕн хăватне тата совет çарĕсем нимĕçсен кирек мĕнле оборонин рубежне те çĕмĕрме пултарнине çирĕппĕн шанса тăнине кăтартса парать, тесе çыраççĕ вĕсем.

Чăннипех те, Витебск Германи оборонинчи хăватлă узелĕсен шутĕнче пулнă, гитлеровецсем ăна пĕр хутчен мар «никам çĕнтерсе илейми бастион» тесе пĕлтернĕ. Лондонри радио-обозреватель Томас Кадетт çакна палăртать: Хĕрлĕ Çар Польша тӳремлĕхĕн хапхине питĕрсе тăракан крепоçсене хирĕç наступлени пуçласа ячĕ, çав тӳремлĕх тăрăх Берлина пымалли чи кĕске çул выртать. «Вырăссем тӳрех Германи чĕри патнелле тапăнса пыраççĕ», — тет обозреватель.

Германи командованийĕ Хĕрлĕ Çар сывăх вăхăтрах активлă операцисем пуçламĕ тесе шутланă, вара хăйĕн салтакĕсене хĕвелтухăç фронтĕнче лăпкă пулĕ тесе шантарнă. Хĕрлĕ Çар, Карели перешеекĕнчи укрепленисене татса кĕрсе, Выборг хулине ирĕке кăларнă хыççăн та, нимĕçсем çаплах — совет командованийĕ фронтăн Финляндири участокĕнчи операцисемпех çырлахса ларĕ, тесе çырнă.

Хĕрлĕ Çар гитлеровецсен пур ĕмĕчĕсемпе шанчăкĕсене те ӳпĕнтерсе хучĕ. Нимĕçсен Витебск патĕнчи группировкине çавăрса илсе пĕтерсе тăкни совет çарĕсене малашнехи операцисенче ăнăçу тума май пачĕ. Белоруссире нимĕçсен оборонин пĕтĕм системине Хĕрлĕ Çар, пĕлсе те ăста маневр туса, çĕмĕрсе пăрахрĕ. Жлобин, Орша, Могилев, Бобруйск, — çакă тĕреклетнĕ паха пунктсем Хĕрлĕ Çара анлă çул уçса параççĕ. Гитлеровецсен Витебск патĕнчи çапăçусенче кăна 77.000 çын вилсе тата тыткăна лексе пĕтнĕ. Çакăн хыççăн ĕнтĕ Геббельс нимĕçсене: «Германи командованийĕ умра тăракан операцисене пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ» тесе, ĕнентерсе лăплантарма пăхни мĕне тăни çинчен калама кирлĕ-и вара!

Ытах каласан, фашистсен пропаганда министрĕ «виççĕмĕш импери» халăхĕпе сахалтарах та сахалтарах калаçма пуçларĕ. Геббельсăн «Дас Райх» хаçатра эрнесерен паракан политикăллă обзорĕсем курăнми пулчĕç. Яланхи радиообозреватель Дитмар та Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи лару-тăру çинчен пур майсемпе те асăнмасăр иртсе кайма тăрăшать. Вăл хăйĕн юлашки обзорĕнче çакнашкал «эластичнăй» сăмахсем кăна каласа иртсе кайнă: «Атлантика фронтĕнчи пекех, тен, хĕвелтухăçĕнче те хăйсен черечĕпе тĕллĕн-тĕллĕн наступлениллĕ çапăçусем пулса иртĕç», — тесе палăртнă вăл «именӳллĕн». Чăннипех те ĕнтĕ гитлерла суеçĕсен тĕрлĕ мыскарасем шухăшласа кăларас пултарулăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк!

Хĕрлĕ Çар çав тери хăватлăн та хăвăрт тата анлăн наступлени туса пыни Дитмарпа çавăн йышши тăмсайсене нимĕнле канăç та памасть.

* * *

Совет çарĕсем хĕвеланăçнелле куçса пыни — Гитлера хирĕçле коалици пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç пĕр-пĕринпе килĕштерсе тунă план тăрăх вăйлă кĕрешӳ пуçласа янине кăтартса парать. Союзниксен çарĕсем питĕ пысăк порта тата тинĕс-çар базине — Шербур хулине тытса илни çинчен пĕлтерни Мускав Орша хулине илнĕ ятпа панă салютсен кĕрлевĕпе пĕр вăхăтра илтĕнсе кайрĕ.

Шербура ирĕке кăларнине питех те пысăк вырăна хурса хакламалла. Çав событи, паллах, Çурçĕр Францири мĕнпур малашнехи кампанире çав тери пысăк вырăн йышăнĕ. Европăри чи тарăн шывлă тата пысăк гаваньлĕ портсенчен пĕрне—Шербур хулине йышăнса илни союзниксене вăрçă пыракан вырăнсене çарсемпе хĕçпăшал куçарас тĕлĕшпе анлă майсем туса пачĕ. Халиччен союзниксен операцийĕсем, вĕсен аллинче çыранра пĕр порт та пулман пирки, анлăнах пулса пырайман. Союзниксем çырана çынсемпе техникăна десант антармалли пысăк мар суднăсемпе кăна куçарма пултарнă. Халĕ ĕнтĕ океан суднисемпе пысăк çар карапĕсем те Шербура ирĕклĕнех пырса кĕме пултараççĕ. Шербур портĕнче нимĕçсем туса хăварнă сиенсене союзниксем çав тери хăвăрт пĕтерсе пыраççĕ.

Шербур союзниксен аллине куçни континент патне пымалли тинĕсри вырăнсенчи мĕнпур стратегиллĕ лару-тăрăва тĕпренех улшăнтарать. Ла-Маншăн çурçĕрти çыранне кăна мар, çавăн пекех тата кăнтăрти çыранне те контроллесе тăрса, Англипе Америка вăйĕсем канал çинче пĕр чăрмавсăрах хуçа пулса тăраççĕ. Германин подводнăй лодкисемпе шыв çинчи карапĕсемшĕн нимĕç шывĕсенчен Атлантика океанне тухмалли чи кĕске çулсем питĕрĕнсе лараççĕ. Фашистсен океанри карапĕсем, халлĕхе Бискай заливĕнчи Брест, Лориан тата Сен-Назер порчĕсенче тăраканскерсем, хăйсен Германи шывĕсем çинче тăракан тĕп вăйĕсенчен татăлса юлнă. Çав карапсем урăх çулпа — Англи тавра каймалли çулпа усă курма хăйуллăх тупайĕçши вара?

Германи çарĕсене Шербур районĕнче пĕтерсе тăкнă хыççăн Англипе Америкăн чылай пысăк вăйĕсем пушанаççĕ. Çакăн результачĕсем халĕ палăрма пуçларĕç те ĕнтĕ. Тилли-сюр-Сель хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен бронетанковăй вăйĕсем нимĕçсен оборонине татса пăрахнă. 4 миля сарлакăш фронтра малалла куçса пырса, союзниксен çарĕсем Виллер—Бокаж—Кан хушшинчи магистрале татнă, Кан хулинчен 10 километрта ларакан Турвиль хулине йышăнса илнĕ тата Одон шывĕ урлă каçнă. Танксем татса кĕнĕ вырăна асăлатсах пыраççĕ. Союзниксем Кан хулине çавăрса илес ĕçе вĕçне çитереççĕ.

Нимĕçсен оборонин пĕтĕм сылтăм флангĕшĕн Кан хули паранни мĕнле хăрушлăх кӳнине ăнланса илсе, Германи командованийĕ Англи çарĕсем малалла куçассине пур вăйсемпе те тытса чарма хăтланать. Анчах çавăн пек хăтланнисем пурте ăнăçсăр путланса лараççĕ — гитлеровецсем пĕр кун хушшинче танксемпе 9 хутчен контратака тунине кашнинчех сире-сире пăрахнă.

Нормандири кĕрешӳ çĕнĕ тапхăра кĕчĕ. Союзниксем хăйсем йышăннă плацдарма çирĕплетрĕç. Халĕ ĕнтĕ Франци çĕршывĕ ăшнелле шалалла каймалли анлă наступленисем пуçланассине кĕтме пур шанчăк та пур. Францин хирĕç тăракан вăйĕсем Кениг генерал командир пулса ертсе пынипе нимĕçсен тылĕнче активлăн кĕрешни союзниксене ăнăçусем тума пур енчен те пулăшса тăрать.

* * *

Юлашки вăхăтра Финляндирен килекен хыпарсем Финлянди правителĕсен вăрă-хурахла ушкăнне пуçĕпех тăрă шыв çине кăлараççĕ. Финлянди правителĕсем хăйсем Гитлерпа унăн ушкăнĕн вăрă-хурахла планĕсене пĕтĕмĕшпех пăхăнса тăнине халиччен пытарса тăма хăтланнă. Вăрçăпа ывăнса çитнĕ халăха улталас тесе, Гитлерăн Финляндири тарçисем пĕрмаях çапла каланă: «Финлянди хăй тĕллĕн вăрçă вăрçать, унăн тĕллевĕсем Германи тĕллевĕсенчен пачах уйрăлса тăраççĕ», тенĕ. Нимĕç çарĕсем Хельсинкине пырса çитни Финлянди правителĕсем фашистла Германие пуçĕпех сутăннине кăтартса парать.

Гитлерпа унăн ушкăнĕ çак хăтланусене Финляндие паракан «пулăшу» пек туса кăтартма хăтланаççĕ. Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп Хельсинкине пынă, фашистла пичет çырнă тăрăх, вăл унта Финлянди правительствипе «пур ыйтусем тăрăх та пĕтĕмĕшпех калаçса татăлса килĕшӳ тунă» пулать. Тĕрĕссипе илсен, хальхи вăхăтра нимĕçсем хăйсен Финляндири лакейĕсене нихăçанхинчен те сахалтарах пулăшу пама пултараççĕ. Германи вăйĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче çыхланса ларнă, вĕсем унта поражени хыççăн поражени тӳсеççĕ. Нимĕçсен ирĕксĕрех Нормандире союзниксен йышлăрах вăйĕсене хирĕç кĕрешме лекет. Кессельринг генералăн çарĕсем Италире ним йĕркесĕр чакса пыраççĕ. Германин Балканри оккупациллĕ çарĕсем ваккăн-тĕвеккĕн сапаланса пĕтнĕ. Кашни кун гитлеровецсене çĕнĕрен çĕнĕ поражени сем кӳрет. Çак условисенче ĕнтĕ нимĕçсем хăйсен панкрута тухнă «союзникĕсене» мĕнле те пулин пулăшу парасси çинчен калаçмалли те çук.

Тĕнчери общественность Финляндие ертсе пыракан ушкăнсен преступникла политикине тивĕçлĕ вырăна хурса хакларĕ. «Финлянди правителĕсен суккăрлăхне тӳрре кăларма нимĕнле сăлтав та çук, — тесе калать Лондонри радио, — вĕсем Финляндин кунçулне мĕнпур çĕршывсем курайман тăшманăн кунçулĕпе, Германи мĕнпур фронтсенче каялла чакса пынă вăхăтра тата ăна пуçĕпех аркатса тăкасси уççăнах курăнса тăнă вăхăтра, çыхăнтарма шут тытрĕç».

США-н Государственнăй департаменчĕ июнĕн 30-мĕшĕнче Финляндипе тытакан дипломатиллĕ çыхăнусене татасси çинчен калакан нотăна пичетлесе кăларчĕ. Çав нотăра Финлянди правительстви хăйне-хăй «нацистла Германин пукани» вырăнне хунине кăтартса панă.

А. БЕЛЬСКАЯ.

РСФСР Наркомздравĕн Шупашкарти Фармацевтика шкулĕ ачасене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Фармацевтика шкулĕ провизорсен помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлет.

Шкулта 3 çул вĕренмелле.

Шкула 15 çултан пуçласа 35 çула çитнĕ арçын ачасемпе хĕрачасене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ

Туллимар вăтам шкултан 1943—44 çулсенче пятерка паллăпа вĕренсе тухнисене тата вăтам шкултан, рабфакран, техникумран, педагогика училищинчен е ытти специальнăй училищĕсенчен вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Шкула кĕме заявлени панисене ыттисене пурне те вырăс чĕлхипе, арифметикăпа, СССР Конституцийĕпе, химипе тата тăван чĕлхепе испытани парсан илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 31-мĕшне çитиччен йышăнаççĕ.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене (хăйсене, копийĕсене мар) ямалла: миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, сывлăх çинчен врач панă справка, ялсовет çирĕплетсе панă икĕ фотокарточка.

Испытанисем сентябрĕн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ. Испытанисенче туллимар вăтам шкулăн программи тăрăх ыйтаççĕ.

Студентсене пурне те стипенди, рабочисемпе тан снабжени, выртса тăмалли вырăн тата общежити параççĕ.

Заявленисене 60 пуслăх марка хурса çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Аптечная, 13. Фармацевтическая школа.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех акăлчансен

«БАГДАДСКИЙ ВОР»

ятлă çĕнĕ, илемлĕ, темиçе сăрпа ӳкернĕ фильмне кăтартать:

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Чăваштрахкассăна Шупашкарта ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: главнăй бухгалтер, агроном, техник-строитель, экономист-статистик, инспекторсем, ревизорсем тата секретарь-машинистка.

Районсенче ĕçлеме практикант-инспекторсем тата бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 10, Чувашстрахкасса. 2—2.

Шупашкарти «Красный мебельщик» артель юсама сĕтел-пукансем тата çĕлĕнĕ япаласем йышăнать. Материал — заказчиксен.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 24, тел 5—01. 2—2.

«Торгплодоовощь» трестне ялан ĕçлеме главнăй бухгалтерăн заместителĕ, финанс пайĕн начальникĕ, бухгалтер-ревизор, транспорт инспекторĕ тата товаровед кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Свердлова, 35. Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00240 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.